М. К. тата Горький ячейкин.

Пир № 10 пус. 19-мĕш кун тухат.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1937 ДЕКАБĔР 5 ВЫРСАРНИКУН 278 (4790)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕ̆стăвкомĕн хаçачĕ

Редакципе кантур адресĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕН: Редакторăн 0—67
Ред. заместительĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

Сывă пултăр Сталинла Конституци!

Пайăн Социалисăмла Аслă Совет çĕршывĕнчи пĕтĕм ĕçхалăхĕ Сталинла çĕнĕ Конституци йышăнни пĕр суйталăк тулторăнне уйăвлать.

Калама вăхăт питех те сахал. Анчах епĕр тунă çĕнтĕрӳсемпе çитĕнӳсем улăпла пысăк. Пĕр çак суйталăк хушшинче тунă ĕçсем пирĕн темиçе вунпăр çулсем хушшиче тунă ĕçсĕнчен иртереççĕ.

Сталинла Конституци пройектне хăçатсем çинче пичетлесе кăларни—капиталисăмла çĕршывсенчи буржуаллă политикă деятелĕсемшĕн, Совет Союзне, унăн çитĕнĕвĕсене, унăн çитĕнĕвĕсене чĕререн кураймăн тăшмансемшĕн пуç тăрăх сивĕ шыв йăнă хăйех пулчĕ. Вĕсенчен пĕркассисем Конституци пройекчĕ пирки пуçĕпех нимĕн шарламасăр иртсе кайма пăхрĕç. Пĕлтерес мар Совет Союзĕн Конституцийĕ çинчен никама та! Ан пĕлчĕр ун çинчен рабочисемпе хресченсем тесе шутларĕç вĕсем. Мĕншĕн тесен, Совет Союзĕнчи чăнлăха рабочисемпе хресченсем пĕлни—капиталисăм тĕнчишĕн вилĕм хăйех. Анчах та чăн йăнăлана пытарма çук. Кун пек хăтланнине нимĕн те тухманнине кура буржуаллă деятелсем Конституци пирки темĕн те пĕр суйа сăмахсем туртса кăларма пуçларĕç. Совет Союз Конституци пăл чăн йăнăлана мар, нимĕн тĕшне тăман хут татки теме пăхрĕç.

Çак иртнĕ суйталăк хушшинчи ĕçсем вĕсем ĕмĕчĕсемпе шанчăкĕ сене петĕмпех ўпĕнтерелпĕçчĕ. Халĕ Совет Союзĕнчи халăхсем çĕнĕ, Сталинла Конституци тăрăх Совет Союзĕн Аслă Советне суйлас чапла тапхăрта пурăнаççĕ.

Сталинла Конституцине йышăнăрапла Совет Союзĕ хăйĕн вăйхăватне тата те ытларах тĕрĕклетесе çитерчĕ, çĕршывра татăклăнах социализăм çĕнтерсе илчĕ.

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Союзĕ—рабочисемпе хресченсен государстви. Совет Союзĕнче пĕтĕм влаç хуларине йалти ĕçсыннисен аллинче тăрать. Совет Союзĕн экономикăла никĕсĕ—ĕçсынна депутачĕсен Совечĕсем. Унăн экономикăла никĕсĕ—хуçалăхăн социалисăмла никĕсĕ. Совет Союзĕнче ўйăм харпăрлăха пĕтернĕ. Пĕтĕм çĕр, çĕр айĕнчи пуйăнлăхсем, шывсем, вăрмансем, заводсем, фабрикăсем, шахтăсем, рудниксем, чукун-сулсем, шывсул транспорчĕ, сывлăш çулĕ, банкăсем, çыхăну, совхозсем, машинă-трактор станцисем, çуртăрăсем—пурте пĕтĕм халăх тивлечĕ пулса тăрăççĕ. Совет Союзĕнче безработицăй çук. Ана ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ. Совет Союзĕнче експлоататăрла классене ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ. Капиталисене, фабрикантсене, заводчиксене тахçанах хăваласа янă. Капиталисăмăн чи нумай йышлă йăлашки класне—кулаксене кол хозсем тунă никĕс çинче пĕтернĕ. Совет Союзĕнче пусмăр йĕркки çук. Совет Союзĕнче сынча çын експлоатацинес йĕркке çук. Хулана йăл хушшинчи хирĕçусене пĕтернĕ. Совет Союзĕнче икĕ клас: рабочи клас, хресченсен класĕ. Вĕсем икĕшĕ те, интеллигенцине пĕрле, классăр коммунисăм общчĕстăн тăвассишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсем икĕшĕ те пĕр тан, пĕр правасемпе усă кураççĕ. Çакна Аслă Советăн çитес суйлавĕнче рабочисемпе хресченсем тата интеллигенцин—пурте пĕртан саспăласи те лайăх кăтартса парать.

Пирĕн çĕршывра хĕрăрăмсем пĕртăнмарăлăхне пĕтернĕ. Совет Союзĕнче хĕрăрăмсем арăсисемпе пĕр тан правасемпе тулăн усă кураççĕ. Вĕсем те суйлава арçынсемпе пĕрле тухаççĕ. Вĕсем те Аслă Совета арçынсемпе танах суйланаççĕ.

Совет Союзĕнче халăхсем хушшинчи пĕртăнмарăлăха пĕтернĕ. Темиçе вунпăр чĕлхелĕ халăх пурте пĕр тăван çемĕрти пек социализăм строительствин çĕнтерĕвĕсемшĕн кĕрешеççĕ.

Совет Союзĕ тĕнчери чи вăйлă промышленнăçăл, чи вăйлă йăлхуçалăхлă çĕршыв пулсе тăчĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсене илемлĕ те телейлĕ пурнăçпа пурăнма мĕн кирлĕ—çавсем пурте пур. Совет Союзĕнчи халăхсен мирлĕ строительствине тăшман килсе тапăнасран хŭтлеме мĕн кирли пурте пур. Совет Союзĕн аслă чикки нсене хăвартлă Хĕрлĕ çар сыхласа тăрать.

Епĕр хамăр заводсенче машинсем тăвакан машинсем тăватпăр. Аэроплансене, танксене, паровозсене, пароходсене, карапсене, комбайнсене, тракторсене, пур тĕрлĕ машинсене — пурне те хамăрăн йăвашки çулсенче туса çартăм çĕнĕ заводсенче тăватпăр.

Тăшмансем çаксене пурне те пирĕнтен тортса илесшĕн. Çавăнпа та епĕр калатпăр: аллусем кĕскерех сирĕн! Епĕр тăшмансене хирĕç ку тăранччен мĕнле вирлĕн кĕрешнĕ, малашне те çавăн пекех вирлен кĕрешĕпĕр. Тĕп пуллăр тăшмансем—ăутçĕршыв разведкисен тăшмăнла троцкисла-зиновьевла бандисемпе тăван çĕршыва сутакан ирсĕрсем!

Пирĕн коммунисен партийĕпе Совет правительствин ĕçхалăх пурнăçне лайăхлатассинчен, пĕтĕм рабочисемпе хресченсене, пĕтĕм ĕçхалăхне илемлĕ те çутă пурнăç парассинчен пуçне урăхла интересе çук. Партипе правительствă хăйсен пĕтĕм вăйне ĕçхалăх интересне параççĕ. Темĕн чухлĕ курортсем, санаторисем, канмалли çуртсем ,ача пăçлисем, ача çурчĕсем —çаксене пурте вĕсем ĕçхалăхне. Тĕрлĕ ăслăлăха хатĕрлекен шкулсем—вĕсем пурте ĕçхалăхне. Музыкă, искусствă, литературă—вĕсем пурте ĕçхалăхне. Пирĕн çĕршывра çамрăксем вăрăм пур çĕрте те çул уçă, такăр, ваттисене—хисеп. Пирĕн çĕршывра кашни вăтă, кашни ĕçлĕмĕн пуянă çын государстăвăран тўлевсĕр пулăшу илет. Çаксене пире пурнĕ те Ленин—Сталин партийĕ пана. Çаксене пурне те Сталинла Конституцире çырса хунă. Ака мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра çав тери пысăк политикăлă хăваласлăх, ака мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра кашни рабочи, кашни колхозник, кашни интеллигент хăйĕн пурнăçне, малашлăхне Сталинла Конституцине çыхăнтăрать, ака мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра кашни рабочи, кашни колхозник, кашни интеллигент хăйĕн Конституци çинчен сăмах таврăнать, ăшшăн Сталин йăтне асăнать.

Пайăн, пĕтĕм халăх Аслă Совет суйлавне хатĕрленĕ кунсенче, чăваш халăхĕ тата тепĕр хут хăйĕн иртнĕ кунçулĕ сине çавăрăнса пăхса Сталинла Конституцине çырса хунă правасемшĕн хĕпĕртесе савăнать. Вăл хăйĕн малашлăхĕ сине хăйăлăн пăхать. Унăн пĕтĕм шухăшĕ, ĕмĕчĕ—çак çĕнтерĕсене пана коммунисла партине ĕçле.

Малашлăх тата телейлĕрех, тата лайăхрах пултăр тесе вăл Аслă Совета хăйĕн хушшинчен чи лайăх вăл-хĕрĕсене, парти ĕçĕшĕн, тăван çĕршыв ĕçĕшĕн, халăх интересĕшĕн тăракан çынсене суйлама хатĕрленет.

Сталинла Конституци Совет Союзĕнчи халăхсемшĕн малашлăхи çĕнтерĕсен йалавĕ пулать пулсан, капиталисăмла çĕршывсене колонисенче пурăнакан халăхсемшĕн капиталисăм йĕркине пĕтерме чĕнекен сутă майăк пулса тăрать.

Сывă пултăр Сталинла Конституци—коммунисен партийĕ йĕртсе пынине кĕрешсе инкĕ çĕнтерĕсене çырса хунă сталинла самаран историлĕ документ!

Сывă пултăр Сталин йăлтăн—телейлĕ халăха телейлĕ Конституци Темиçе вунпăр чĕлхелĕ халăх пурте пĕр тăван çемĕрти пек социализăм строительствин çĕнтерĕвĕсемшĕн кĕрешеççĕ.

Совет Союзĕ тĕнчери чи вăйлă промышленнăçăл, чи вăйлă йăлхуçалăхлă çĕршыв пулсе тăчĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсене илемлĕ те телейлĕ пурнăçпа пурăнма мĕн кирлĕ—çавсем пурте пур. Совет Союзĕнчи халăхсен мирлĕ строительствине тăшман килсе тапăнасран хŭтлеме мĕн кирли пурте пур. Совет Союзĕн аслă чикки нсене хăвартлă Хĕрлĕ çар сыхласа тăрать.

Епĕр хамăр заводсенче машинсем тăвакан машинсем тăватпăр. Аэроплансене, танксене, паровозсене, пароходсене, карапсене, комбайнсене, тракторсене, пур тĕрлĕ машинсене — пурне те хамăрăн йăвашки çулсенче туса çартăм çĕнĕ заводсенче тăватпăр.

Тăшмансем çаксене пурне те пирĕнтен тортса илесшĕн. Çавăнпа та епĕр калатпăр: аллусем кĕскерех сирĕн! Епĕр тăшмансене хирĕç ку тăранччен мĕнле вирлĕн кĕрешнĕ, малашне те çавăн пекех вирлен кĕрешĕпĕр. Тĕп пуллăр тăшмансем—ăутçĕршыв разведкисен тăшмăнла троцкисла-зиновьевла бандисемпе тăван çĕршыва сутакан ирсĕрсем!

Пирĕн коммунисен партийĕпе Совет правительствин ĕçхалăх пурнăçне лайăхлатассинчен, пĕтĕм рабочисемпе хресченсене, пĕтĕм ĕçхалăхне илемлĕ те çутă пурнăç парассинчен пуçне урăхла интересе çук. Партипе правительствă хăйсен пĕтĕм вăйне ĕçхалăх интересне параççĕ. Темĕн чухлĕ курортсем, санаторисем, канмалли çуртсем ,ача пăçлисем, ача çурчĕсем —çаксене пурте вĕсем ĕçхалăхне. Тĕрлĕ ăслăлăха хатĕрлекен шкулсем—вĕсем пурте ĕçхалăхне. Музыкă, искусствă, литературă—вĕсем пурте ĕçхалăхне. Пирĕн çĕршывра çамрăксем вăрăм пур çĕрте те çул уçă, такăр, ваттисене—хисеп. Пирĕн çĕршывра кашни вăтă, кашни ĕçлĕмĕн пуянă çын государстăвăран тўлевсĕр пулăшу илет. Çаксене пире пурнĕ те Ленин—Сталин партийĕ пана. Çаксене пурне те Сталинла Конституцире çырса хунă. Ака мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра çав тери пысăк политикăлă хăваласлăх, ака мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра кашни рабочи, кашни колхозник, кашни интеллигент хăйĕн пурнăçне, малашлăхне Сталинла Конституцине çыхăнтăрать, ака мĕншĕн ĕнтĕ пирĕн çĕршывра кашни рабочи, кашни колхозник, кашни интеллигент

Сталинла Конституци йалавĕпе

1936 çулти декабрĕн 5-мĕш кунĕ йăлăнлăха тĕрлĕхĕн асăмĕнче йулат: ку кун Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕнчи Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сĕвĕсĕ халăхсен аслă çулпуçĕн Сталин йулташăн доклачĕ тăрăх СССР Сойузĕнчи социалисăм çĕнтерĕвĕне çирĕплетсе хураканСССР Сойузĕн çĕнĕ Конституци проекчĕне, совет халăхĕн ирĕклĕ, телейлĕ пурăçĕн Конституцине çирĕплетнĕ. „Кĕрĕ шупне йăвăрлăхсем тÿснĕ çула утса тухнă хыççăн, пирĕн çĕнтерÿсем кÿне çимĕссем çинчен калакан хамăр Конституци пурри камăлла та савăнăçлă,— тесе калаçă Сталин йулташ çав сĕвĕра нойабрĕн 25-мĕшĕнче тунă хăйĕн историлĕ докладĕнче.—Пирĕн çынсем мĕншĕн кĕрешнине тата вĕсем пĕтĕм тĕнче историнче мĕнле палла историлĕ çĕнтерÿсем тунине пĕлме камăлла та савăнăçлă. Çак вăл пирĕн рабочи класăн, пирĕн хресченсен, пирĕн ĕçлĕ интеллигенцин âстăнне хĕçпăшаллантăрать. Çак вăл тивĕçлĕ савăнăçлă камăла малаллă йăрса çĕклентерет. Çак вăл хамăр вăйăсем çине шанăсçине çирĕплетет тата коммунисăмăн çĕнĕ çĕнтерĕвĕсене çĕнĕ кĕрешĕве мобилизвилет".

Сталинла Конституци йышăннине çыхăнса тăракан куна вăйăсасăн-не СССР Сойузĕн ĕççыннисем чыслăн упраса усрăççĕ.

СССР Сойузĕнчи Советсен VII-ш Сĕвĕсе, Сталин йулташ пуçарнине, СССР Сойузĕн унченкин Конституцине, 1924 çулта йышăннăскере, тĕплĕ улăштарусем кĕртесси çинчен постановлени йышăнчĕ

1935 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче СССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕ Конституци Комиссийĕ, Сталин йулташа унăн председательĕ туса хучĕ. Конституци Комиссийĕ туса хатĕрленĕ проекта 1936 çулти июлĕн 20-мĕшĕнче пичетлесе каларăç та СССР Сойузĕн Ĕçтăвакан Тĕп Комитечĕн Президиумĕ йышăннă тăрăх пĕтĕм халăха сÿтсе-явма пикĕ.

Йышлăран та йышлă массăсем проекта тăвата уйăх ытла сÿтсе-явăнăн халăх хăйĕн коммунисла партине тата çĕнĕ Конституци туса паракан Сталин йулташа пĕтĕм чĕререн йуратнине кăтартса паракан тăвăтлăран та тăвăтлă демонстраци пулса тăчĕ. Пĕтĕм халăх сÿтсе-явăн çĕршывăн сакăн кăларакан органĕнче ĕçлеме пит те пысăк материал пачĕ. Сталин йулташ Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сĕвĕсенче Редакци Комиссăн ĕçĕсен резютачĕсем çинчен тунă докладра çакна палăртрĕ: „СССР Сойузĕн Конституцине туса хатĕрлес тата ăна пĕтĕмпех майлаштарас ĕçре, каласмали те çук, пĕтĕм халăх сÿтсе-явăнни питĕ пысăк усă пачĕ".

1936 çулти нойабрĕн 25-мĕшĕнче Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕнчи Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш сĕвĕсенче Сталин йулташ „СССР Сойузĕн Конституци пройекчĕ çинчен" доклад туса пачĕ. Çĕнĕ Конституцине генилĕ туса параканăн каçни сăмахне пĕтĕм çĕршыв шăтăр тимлĕн итлерĕ.

1936 çулти декабрĕн 5-мĕшĕнче Сĕвĕсе СССР Сойузĕн çĕнĕ Конституци проекчĕне—тĕнчери чи демократлă Конституцине калама çук пысăк хаваслăхпа çирĕплетрĕ.

Декабрĕн 5-мĕш кунне Сĕвĕсе пĕтĕм халăх праçникĕ тесе пĕлтерчĕ.

* * *

Пролетари диктатурине туса хурсан çеç ĕççынни массисен чăн-чăн демократлăх историне пуçласа çĕнтерчĕ. Совет власчĕ 1918 çулти РСФС Республикĕн Конституцийĕнче пролетари диктатурине—çынни, чи аслă йышши демократлăх çирĕплетсе хучĕ. Ленинпа Сталин пĕрлемĕш совет Конституцине туса параканнисем пулнă, унăн тĕп положенийĕсене вĕсем çырнă.

Советсен пĕрлемĕш Конституцийĕнче çĕнтерсе власа тăнă пролетариат диктатурин историлĕ задачине—классăр обществăна тăвасăсине пĕлтерсе каланă пулнă.

1918 çулта Петĕм Российăри Советсен V-мĕш сĕвĕсе йышăннă РСФСР Конституцийĕ 1924 çулччен пынă, вăл пысăкран та пысăк историлĕ ĕç турă. Мĕйĕушшăн рабочисемпе чухăн хресченсен Советсенче—пролетари диктатурин органĕсенче практикăра государствă ĕçне вĕрентсе пынă.

1924 çулти январĕн 31-мĕшĕнче СССР Сойузĕнчи Советсен II мĕш Сĕвĕсĕ Сталин йулташ йĕртсе пынине çырса хатĕрленĕ çĕнĕ Конституцине çирĕплетнĕ.

1924 çулти Конституци СССР Сойузĕ пĕрлĕхлĕ сойузлă государствă пулăсне тăнине, вăл унта пурнакан тĕрлĕ нации ĕççыннисен интересĕсен пĕрлĕхĕ çинче никĕсленсе тăнине çирĕплетнĕ. Çав вăхăтрах каçни сойузлă республикăна сойуздан иркĕлен тухмалли правапа суверенитет (государствăла хăйхалленлĕх) панă.

1924 çулти Конституци те, советсен пĕрлемĕш Конституцийĕ пекех, пролетари диктатурин тĕп санкцине пулнă.

1924 çулти Конституци çуралса тухнă чухнех лару-тăрува В. М. Молотов Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сĕвĕсĕнче çапла характеристикă панă: „Ун чухне епĕр пирĕн çĕршывра социализăм тĕнчерĕвĕ çинчен калама пултарайман. „Кам—кама" тенĕ ытлуа тата хуман пулнă. Социалисăмлă хуçалăх çĕкленĕ тапхăрĕнче пулнă, вăл малаврах тăни те-палăрнă ĕнтĕ, анчах капиталисла элементсем ÿсе пынă-ха. Йалта вара вак хăрăпăрла хуçалăх—сапса çĕмĕрнĕ капиталисмăн шултраях йулашки пуçлула тăнă".

Пролетари революцийĕн аслă стратегĕ Сталин йулташ çав условиссенче çĕршыва индустрилессине йăлăхуçалăхне коллективлас историлĕ программă мĕнле пулмалине малаллаха генилĕ курса каласа панă.

* * *

1 статйа. Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ рабочисемпе хресченсен социалисăмла патшалăхĕ пулса тăрать.

2 статйа. СССР Сойузĕн политикăлă никĕсĕ—ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем, помещикссемпе капиталиссен власне сирпĕтсе антарнипе тата пролетари диктатурин çĕнтерсе илнипе ÿссе çирĕпленнĕ Советсем пулса тăрассĕ.

3 статйа. СССР Сойузĕнче пĕтĕм влаç ĕççынни депутачĕсен Совечĕсем урлă хулапа йал ĕççыннисен аллинче тăрать.

Çав историлĕ программăна, пирĕн çĕршыври социалисăм йăлтах та пĕтĕмпех çĕнтерессине татса пăхăкерĕ, Аслă Сталин йĕртсе пынине Совет Сойузĕн халăхĕсем чыслăн пурăçса кĕртрĕç.

Троцкисен тата бухаринцĕсен ирсĕр бандине хирĕç пынă çапăçусенче Сталин йулташ пĕр çĕршывра социализăм тума май пурри çинчен Ленин вĕрентнине, рабочи класа тата ĕççынни массисене çине тăрса çĕнтерÿ тумали вирлĕ кĕрешÿ программине хĕçпăшаллантăрăкерне, хÿтлесе хăварса малăлла ataлантарса пычĕ.

ПСК(б)Партин ленинла-сталинла Тĕнкомĕ мухтавлă йĕртсе пынине „пирĕн советĕ обществи халь тĕпрен илсен социализăма пурнăçа кĕртнĕ ĕнтĕ, социалисăмлă йĕркене тунă, урăхла каласан, марксисем тепĕр тĕрлĕ—коммунисăмăн пирвайăхи ĕçпуçлăвĕш сыпăкĕ тенине пурнăçа кĕртнĕ". (Сталин).

Експлоататăрла классене пĕтернĕ, икĕ туслă класран тăракан обществă туса хунă, пролетари диктатури никĕсне чылай сарнă. 1937 çулта СССР Сойузĕнчи халăхăн класлă составĕ çапла тăрат: рабочисемпе служăщăисем пĕрле 34,7 проц., колхозçăсем хресченĕсем, кооперацинелĕ кустарсемпе ремесленниксем 55,5 проц., хресчен-йединоличниксем 5,5 проц., мăтти халăхсем—вĕренекенсем, пенсионерсем, Хĕрлĕ çар т. ыт.—4,2 проц. (1913 çулта експлоататăрла классем—буржуази, помещикисем, суту-илăвçăсем, кулаксем—халăхăн чылай пайĕ пулса тăнă—15,9 проц.).

Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕнчи Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сĕвĕсĕ йышăннă çĕнĕ Конституци СССР Сойузĕнчи социалисăм çĕнтерĕвне кăтартса пачĕ, çавăнпа ĕнтĕ ăна совет халăхĕ,тивĕçлипе çĕнтерне социализăмăн Сталинла Конституцийĕ тесе йăт пачĕ.

* * *

Буржуалă-демократилĕ çĕршывсен конституцийĕсем граждăнсен пĕр-пĕр правипе ирĕклĕхĕ çинчен йăвăçĕш кăна пĕлтерсе каласçĕ. Капиталисмăлă çĕршывсенчи ĕççыннисене эксплоатаци тĕнчинче çав правасем пуйăнсемшĕн çеç пуррине кулленхи практикăлă опыт лайăх ĕнентерĕнĕ парат. Капиталисмăлă обществăри ĕççыннисен тискер експлоатаци тÿссе пурăннăçĕн пуçне урăх нимĕн те çук.

Сталинла Конституцире—тĕнчери чи демократлĕ Конституцире СССР Сойузĕнчи ĕççыннисен социалисăм çĕнтерĕнине пула çуралса тухнă аслă прависене: ĕçлев правине, канăç правине, вĕренÿ правине, вăтăлсан пурăнма пулăшу илмели правине пĕлтерсе гарантилеве.

„Ĕçлев прави" текен лозунга експлоататăрпа пурăнăçа кĕрешекен егемлĕхĕн йăлавĕсем сине йăлăнăç çырнă, йăлăнăк вăл капиталисмăлă експлоатацине хирĕç протеслевине пĕлтерсе тăракании пулнă. Егемлĕхĕн чи лайăх ăс-пуçĕсем нумай вĕмĕрсем хушши çăк пек обществă çинчен—çынна ĕç паракан, ĕçлев прави параканăн обществă çинчен ĕмĕтленĕç.

Анчах „буржуази йăнланă пек ĕçлев прави мине пĕлтермен йăпала, мĕскĕнле ырă сунни пулать" (Маркс). Капиталисмăпа ĕçлев прави—иккĕшĕ пĕрле пулма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен капиталисам безработнăйсен йăланхи çарĕçĕ пурăнма пултараймаçт. Хăйĕн вăхăтра официаллă тулли мар пĕлтернĕ тăрăх Америкăн Пĕрлешÿлĕ Штачĕсенче безработнăйсем вунă мĕлăйăн çын, фашисла Германире виçĕ мĕлăйăн ытларах, Англире икĕ мĕлăйăн çын. Капиталисмăлă çĕршывсенче безработнăйсен çăрне тусăнса пыракан мĕйĕушшăн хресченсем татти-сыпиçĕр хутшăнса тăрассĕ, мĕншĕн тесен капиталисăм условийĕсенчĕ хреченсен ытларахăшĕ тăтăшах тусăнса пыни тата хресченсен нумай мар пайĕ пуйăса пыни йăлăнăçлă тĕп саккунĕ пулса тăрат.

Капиталисăм çĕршывĕсенче тытса чăраннă йăтăнса килекен экономиклă çĕнĕ кризис ĕççынниемшĕн тата пусмăрти етемлĕхшĕн вĕçĕ-хĕррисĕр пысăк инкек илсе пырат.

Капиталисăма пĕтерни тата социализăм йăлтах çĕнтерни кăна, Ленин—Сталин партинĕ нумай çул хушши кĕрешнине хатĕрлесе пурăнăçа кĕртнĕскерпех, СССР Сойузĕн телейлĕ ĕççынниесене—Сталинла Конституци пĕлтерсе каланă чăнăн ĕçлев прави паче. Халăхи вăхăт тĕлне Совет Сойузĕнче рабочисемпе служăщăисен хисепĕ 26,3 мĕлăйăн таран ÿсрĕ (1928 çулта 11,6 мĕлăйăн пулнă).

Анчах Сталинла Конституци граждăнсен прависене пĕлтерсе каларе кăна мар.

„Çĕнĕ Конституци пройекчĕн уйрăмлăхĕ сакăнтă,—тесе каланă Сталин йулташ Советсен Чрезвычайлă VIII-мĕш Сĕвĕсенче,—вăл граждăнсен формăлă прависене çырса хунине кăна чарăнмасăр, вăл тĕп вырăна çав прависене пурнăçа кĕртмели гарантисен ыйтуне, çав прависене пурнăçа кĕртмели хатĕрсен ыйтуне лартать... Вăл ĕçлев прави пурри çинчен пĕлтерет кăна мар, вăл ăна совет общественине кризиссем çук факта, безработицина пĕтернĕ факта саккунласа çирĕплетнипе пурнăçа кĕртет".

Совет хĕрăмăсемшĕн сталинла тăрăшни çавна чи лайăх кăтартса параканни пулса тăрат. Совет хĕрăрăмне арçынпа пĕр тан права панă кăна мар, унăн тата хăйĕн ĕçлев правине пурнăçа кĕртме пур майсем те пур. Амăшне ачине пахма çĕршывра калама çук нумай учрежденисем уçнă Ансăртран мар ĕнтĕ хальхи вăхăтра пирĕн çĕршыври мĕн пур правасемпе служăщăисем хушшинче хĕрăрăмсем виççĕмĕш пайĕнчен те ытларах (тăхăр мĕлăйăн çын).

Пирĕн совет рабочийĕ революци пуляченки Россиăлă рабочийĕнчен тăватă ÿрт тухăçлăрах ĕçлет. Пирĕн çĕршыври ирĕклĕ ĕçлев—ыйтăвлăх ĕçĕ, чылай ĕçĕ, паттăрлăхпа хăйăлăх ĕçĕ пулса тачĕ.

Аслă Конституци кашни статйи çыннăн сталинла тăрăшнипе сăрхăннă. ССР Сойуз гражданĕсен чăн-чăн ĕçлев прави, канăç прави, вĕренÿ прави, вăтăлсан пурăнма пулăшу илмели права пур.

***

Сталинла Конституцийĕ йышăннинĕ çĕршыв хуларине йăлти ĕççынни массисен политикăлă активлăхĕ нихăçанхи пек мар çекленнине кĕтсе илчĕ. Çав çекленĕ пĕтĕмĕшпе ĕç хастарлăхĕ ÿсиннине, стахановла йухăмпа социалисăмлă ăмăрту тăвăл пек саралса кайнинне йар-ÿссăн палăрчĕ.

Йапон-немĕç-троцкисла-бухаринла шпионсен, предатĕлсен, диверсантсен, сăтăрçăсен тĕл йăвăсене çĕмĕрсе тăкни çĕршывăн хуçалăх атăланăвĕ ваÿăн çĕнĕ майсем туса пачĕ, çĕршывăн хăватне нумай вăйлатрĕ.

Вĕçне çитсе пыракан 1937 çул социалисăмлă экономикăн пысăкран та пысăк çĕнĕ çĕнтерĕвĕсен çулĕ пулса тăрат. 1937 çулта пирĕн промышленнăç вăрçăчченхинчен сакăр хут ытларах продукци парат. Çакна аса илтермелес: ССР Сойузĕн промышленнăç продукцийĕн тăвăтăмĕш пăйĕнчен виççĕмĕш пайне совет власĕ туса лартнă заводсем параççĕ.

1937 çулти апрелĕн 1-мĕшĕнче, срукран тăхăр уйăх малтан, ССР Сойузĕн промышленнăçĕ иккĕмĕш пăтатилеткă планне тултарчĕ. Совет Сойузĕнчи рабочи класс Сталин йулташ генилĕ йĕртсе пынине халăх хуçалăхне техникă тĕлĕнтĕнчен реконструкцилес тĕлĕнтине пĕтĕ те пысăк пултарулă ĕç туса иртерчĕ.

Колхозлă йăл Сталинла Конституцине 1937 çулта вăйлă тырпул туса илнине ответлет. Колхозсенче стахановла йухăм хăватлă вăй пуçса тăчĕ, вăл колхоз производствин пур облаçĕсенче те пĕтĕм çĕршыв пĕлекен революционер-семĕне новаторсене темиçе çĕр çын çитĕнтерчĕ.

Колхозçăсем кăçал пуйăн тырпул туса илни, вăл ĕнтĕ пĕлтĕрхи тухăçлăхран пĕр хут çурă иртсе кайни, пур çĕрте те тырпул тухăçлăхĕ ÿсни, тырпул тухăçлăхĕ революцин пулаччăнни Россиăлă пăнă тухăçлăхран чылай иртсе кайни,—çавсем вĕсем пÿрте колхоз хресченĕсен Сталинла Конституцине пула çуралса тухнă политикăлă çĕкленевĕ пăнă результатсем пулса тăнăççĕ. Колхоз хресченĕсем „хăйсен ĕçне тата пурнăçне уйрăмăн пурăнса мар, кайа йулнă техникăпа мар, коллективла тата кучухăсен техникăпа туса пыраççĕ" (Сталин).

* * *

Историлĕ кун—декабрĕн 5-мĕшĕ çулталăк тултарнине социализăм çĕршывĕ СССР Сойузĕнчи халăхсен пурнăçĕнчи аслă событисем—СССР Сойузĕн Советĕсене суйлас умĕн уявлать.

Социалисăмлă аслă державăн граждăнĕсем декабрĕн 12-мĕшĕнче Сталинла Конституци пĕлтерсе каланă тĕнчери чи демократлĕ йĕркене тăрăх—пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿррех суйламала правапа вăрттăн сасăласа хăйсен аслă органне суйлаççĕ.

Совет суйлавçисен курман-илтмен политикăлă активлăхĕ СССР Сойузĕнчи суйлавсен социалисăмлă чăн-чăн демократлăхĕне чи авăн катартса параканни пулса тăрат. Социалисăмлă государствă пĕтĕм тĕнче умĕнче хăйĕн халăхĕн никам ишелтерĕмĕн политикăлă тата материаллĕ пĕрлĕхне, çав пĕрлех хăйĕн малти отрăчĕне—тăван коммунисла партине никам пăсайми тата сыхăнса тăнине, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ тавра пĕтĕçсе тăнине демонстрацилет. Мĕйĕушшăн ĕççыннисем Конституци туса паракан Сталин йулташа тата унăн соратникĕсене СССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйламали йĕркемĕш кандидата палăртрĕç.

Совет халăхĕ çĕнтерÿлĕн малала пынине тытса чарма пултаракан вăй тĕнчере çук. Йапонине Германи фашисăмĕн ирсĕр наймăнкĕсене—троцкисла-бухаринла шпионсене тата провокатăрсене совет халăхĕ, урăй ăытăсене пĕтернĕ пек, пĕтерсе пырат. Сталин ученикĕ Н. И. Йежов йĕртсе пыракан наркомвнудĕлăçем, совет халăхĕ пулăшни çине тайăнса, халăхăн ирсĕр тăшманĕсен тĕп йăвисене çĕмĕрсе тăкрĕç. ССР Сойузĕн Сталинла Конституцине хĕçпăшаллăнă халăхĕсем фашисла тасамарлăхсене совет çĕрĕ çинчен вĕçне çити тăсатса каларĕç, социализăм тăшманĕсене нимĕн йулми пĕтерсе хурĕç.

Сывă пултăр çĕнтернĕ социализăмăн аслă Сталинла Конституцийĕ!

ĔÇЛЕВ ПРАВИ

Çулталăк кайарах епĕр хамăрăн никам та, нихăçан та, нимĕнле вăйпа та çĕмĕрĕми социализăмла çĕршывăн çĕнтерÿвĕсене Сталинла Конституци çине çырса çирĕплетрĕмĕр. Сталинла Конституци кашни статйи—коммуниссен партийĕ йĕртсе пынине социализăм тăвасăсишĕн пыракан керешÿвĕн мухтавлă сыпăкĕсем пулса тăрасçĕ.

„ССР Сойузĕн граждăнĕсен ĕçлев прави пур, урăхла каласан, хăйсен ĕçлевĕшĕн пысăкшĕшĕне пахалăхне кура тÿлекен гарантиленĕ-ĕç илес права пур.

Ĕçлев прави халăх хуçалăхне социалисăмла организацилинине, совет общественин, производствопа йăвăçсем пĕрмайăх ÿсее пынине, хуçалăх кризиссĕмсĕр пулма пултарассине пĕтеринне тата безработицăна пĕтеринне пурнăçа кĕрсе пырать". (Конституци 118-мĕш статйи).

Ĕçлев прави лозунгĕ ĕлĕк авăлах çурăлнă. Вунтăхăрĕмĕш ĕмĕрĕн малтанхи çур ĕмĕрĕнчех социал-утописен (Сен-Симон, Фурйе тата ытти-сем те) хăйсен пулас обществăн çинчен çырнă ĕçсĕсенче ĕçлев мĕнле пуласси çинчен мăтту лартнă. Вăл вăхăтра ĕçлев прави лозунгĕ рабочисен массин безработицăна, чухăнлăха хирĕç пыракан кĕрешĕвĕн лозунгĕ пулнă. Францире, 1848 çулта пулса иртнĕ буржуалă-демократилĕ революцире рабочисен массисем вирлĕн хĕснине правительствă ĕçлев прави лозунгне йышăнса пур граждăнсене те ĕç тăма пулса декрет кăларнă.

Анчах вăл правапа рабочисен массисем тата ĕççынниесем пур пĕрех усă кураймăн. Вăл правапа рабочисемпе ĕççынниесем патне çитиччченех капиталисăмла обществăн экономикă никĕсĕ — производствăпа хăтĕрĕсем уйрăм хăрăпăрăхра пулăнăп, çынна çын експлоатацилени пуçласа пулнă.

Капиталисăм обществăнче ĕçлев прави пурнăçа пулма пултараймасть. Мĕншĕн тесен, унта производствăпа хатĕрĕсем уйрăм хăрăпăрăхра тăраççĕ. Кризиссен йăвăрлăхĕ пĕтĕмпех ĕççынниесем çине тийенет. Кризиссем мĕлăйшăн рабочисене ĕçсĕр хăварса вилĕм хуранне патне илсе пыраççĕ,

„Капиталисăм вăхăтĕнче ĕç вăй уйрăм, хăйшĕн кăна пулса пырать,—тенĕ Сталин йулташ стахановцесен Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш канашлăвĕнче. — Ытларах ĕçлерен, ытларах ил те пурăн вара хăй пĕлĕнĕ пек. Сана никам та пĕлмест, пĕлессшĕн те мар. Есĕ капиталиссемшĕн ĕçлетĕн, вĕсене—пуйăтаратăн. Урăхла йепле пултăр-ха? Сана експлоататорсене пуйăтама тара тытнă та ĕнтĕ. Есĕ кунпа килĕшместĕн—ĕçсĕр йулнисен ретне чуптар та хăв пĕлнĕ пек тертленсе пурăн,—урăхсисене, çăмăлтарах каласаканскене тупатпăр".

Çавăн пек услови лартăр капиталисăм рабочисемпе ĕççынниесен умне. Капиталиссемшĕн пысăк услам илессишĕн нимĕнле преступленисем умĕнче чарăнса тăмасăр рабочисемпе ĕççынниесене ытларах пусмăр ăйне пусарса пырассĕç, безработицăна вăйлатассĕç. Лигă наци кăтартни тăрăх, 32 капиталисăмла патшалăхра 1936 çулта ĕçсĕр йулнисем 20,5 мĕлăйăн çын пулнă. Çемйе членĕсемпе пĕрле иксей капиталисăм тĕнчинче ĕçсĕр йулнисем хальхи вăхăтра Совет Сойузĕнче пурăнакан халăхăн çурăн чухлĕ шутланассĕç. (Ку хисепе ĕçсĕр йулнă батрăксемпе килти работницăсем тата ытти-сем те кĕмеççĕ. Ку хисепе Китайри тата Индири ĕçсĕр йулнисем те кĕмеççĕ). Ăйглире пулаттки 16 çул хушшинче кашни 7 рабочирен пĕри ĕçсĕр йулнă. Германире 1929—1933 çулсенче кашни 4 рабочирен пĕри ĕçсĕр пулнă.

Ĕçсĕр йулнисен пурнăçĕ чăтма çăн йăвăр. Вĕсен пурнăçĕ çинчен буржуаза писатĕл А. Йоаганна çырнă „Гибель Америки ог избытка" кĕнекере тухнă рабочисен çырăвĕсем те лайăх каласа парассçе.

„1931 çулта епĕ пĕтĕмпе те 5 кун çеç ĕçлерĕм,—тесе çарат Лос Анжелосри ĕçсĕр йулнă Пат Догерти.—Иерехине епĕ авланнă çынсене нефть районĕсенче ĕçлеме кĕмешкĕн хăйсен йăвăсене пĕлтерме ыйтакан пĕлтерÿ вуларăм. Епĕ ăна тунтикун ирхине вуларăм. Сакăр сехет те 50 минутра епĕ унта пултăм. Икĕ сехет те 30 минутра манăн черет çитрĕ. Манран нумай тĕрлĕ ыйтуем ыйтса пĕлчĕç те виçĕ ерне хушшинче пĕлтертĕпĕр те каласа пачĕç. Виçĕ ерне 6 уйăха çитрĕ ĕнтĕ. Епĕ арăм ĕçленине пула çеç выçăла вилессинчен хăтăлса йултăм".

Ĕçсĕр йулнисем çеç мар, ĕçлекен рабочисем те нĕйăр условисенче пурăнассçĕ. Германиире власа фашиссем илнĕренне (1933 çул) ĕç ухçи хисепне ÿстерме чарнă. Çав вăхăтрах ĕç ухçинчен тытса йуласси ÿсее пырат. Германири рабочи халĕ хайĕн ĕç ухçипе 5 çул кайрах илнĕ таварăн 5-мĕш пайне çеç илмĕ пултарат. Уйрăмăнах самрăкссене ĕçхăрăмсем тата колонисенчи ĕççынниесем йăвăр условисене водевĕнче ĕçленĕ, халĕ Сĕмĕркери „Большевик" заводĕнче ĕçлекен рабочи-стахановец Назар Соловйов йулташ:

„Ирхине 6 сехетрен пусласа кăçхине 6 сехете çитичченех ĕçлеттĕмĕрччĕ. Çавăн чухнĕ ĕçленĕшĕн илнĕ ухçа çиме те çитмеççтчĕ. Кашни кун помидорпа çăкăр пулнă пирĕн апат. Чылай вăхăт ĕçлесен тутăрсем çĕтĕлсе çитрĕç. Тумтирсене йусамалăх ухçа тупасшăн тата 4 сехет ытларах ĕçлеме пуçларăм.

Талăкра 16 сехет хушши ĕçлесе ывăннă хыççăн пĕчĕк, тăвăр пÿлĕме ая хватер хуçи пана чăпта сарса, çийе ĕçре хурăрла пĕтнĕ пинша витĕнсе çывăраттăмччĕ".

Çапла пулнă патша чухне рабочисемпе ĕççынниесен „ĕçлев прави".

Октябрĕрти Социалисăмла революцин çеç капиталисмăла харпăрăха сапса салатса, çынна çын експлоатацилессине пĕтерсе халăх хуçалăхне социалисăмла организацилесе ĕçлев правине пурнăçлă тума условисем пачĕ.

— Малашшăн пурнăç пирки икĕленместĕп,—тет Канашри вагонсем йусакан заводри токăр В. Горбунов йулташ. Горбунов çеç мар, пирĕн телейлĕ çĕршывра никам та ыранхи пурнăçăн иккĕленмест. Мĕншĕн тесен пирĕн совет çĕршывĕнче каçни гражданинăн, вăл хĕрарăм-и, арçын-и, çамăк-и, вырăс-и, тутăр-и, чăваш-и, унăн аллинче ĕçлев прави пур. Ĕççынниен массисем ĕçлев прави пурăçа пурринче хăйсен пурнăçĕнче курассçĕ. Пирĕн Совет Сойузĕнче чи кĕске ĕçкуне—7 сехетлĕ ĕçкуне. 7 сехет ĕçленĕ хыççăн канма та, вĕренме те вăхăт пур.

„Таса та çутă пÿлĕмре пурăнни, семçе выран çинче сывăрни, тутлă апат-çимĕç çине пурăнни—çаксем пурте манăн пурнăçра пур, çаксем пурте ĕçлев прави пана пуйăнăлăксем,—тет Сĕмĕрле комбинатĕнчи çамăк рабочи Николайев йулташ.

Ĕçлев прави ĕççынниесем аллинче пуйăн та куçтурăл пурнăçăн çăлкуçĕ пулса тăрат. Ĕçлев прави ĕççынниесен массин мĕлăйшăн çăлкуçĕ пулса тăрат. Ĕçлев прави ĕççынниесен массин мĕлăйшăн çăлкуçĕ пулса тăрат. Ĕçлев прави ĕççынниесен массин мĕлăйшăн çăлкуçĕ пулса тăрат. Ĕçлев прави ĕççынниесен массин мĕлăйшăн çăлкуçĕ пулса тăрат.

Рабочисен хисепĕ пĕр çĕршывра 1936 çулта рабочисемпе служăщăисен хисепĕ 1913 çулхине танлашăнăç, 2,3 хут ÿснĕ. 1925 çулта пĕтĕм Совет Сойузĕнчи промышленнăçра инженерла-техникăра работникесем 62 пин çын пулнă пулсан, 1937 çулта 578 пин çынна çитнĕ. Промышленнăçра хĕрарăмсен хисепĕ те ÿссех пырат. Пирĕн Совет Сойузĕнче хĕрарăмсем арçынсемпе пĕртан правасемпе усă курăççĕ.

Чăваш республикĕнче промышленнăç ÿсее пынине пĕрлех рабочисемпе служăщăисен тата инженерла-техникăла рабочисен йышĕ ÿссех пырать. Хăйăн Чăваш республик территорийĕнче вăрçăчченхи вăхăтра пĕтĕм предприйатисенче 1.563 рабочи пулнă. 1936 çулта 12.770 рабочи! Çапла вара, рабочисен хисепĕ 8 хут ÿснĕ. Вăл хисепрен чăвашсем 58 процент шутланаççĕ. Революци пулнăранпа производствăлă-техникăлă интеллигенци ÿссе çитĕнчĕ. Хальхи вăхăтра промышленнăçра 782 инженерла-техникăла работниксем ĕçлеççĕ.

Ĕçлев правине пурнăçа кĕртни ĕççынниесен пурнăçне йăла условисене лайăхлатма пысăк майсем туса пачĕ. Рабочисен ĕçкуçи çулăм çулах ÿссе пырат. 1928 çулта рабочин çулталăкри вăтам ĕçкуçи 505 тенкĕ пулнă пулсан, 1936 çулта 2.158 тенкĕ çитнĕ! Куçтур строительствине укçа-тенкĕ хывасси те ÿссех пырат.

Ĕçлев прави ĕççынниесен аллинче пуйăн та куçтурăл пурнăçăн çăлкуçĕ пулса тăнине пĕрлех социалисăмла общественăн пуйăнăлăкне хăвăртăн малалла илсе пыма условисем туса паратъ. Пирĕн ĕçлев вăл—капиталисăмла патшалăхсенче пек ирĕкĕçĕ ĕç мар, савăнăçлă ирĕклĕ ĕç. Совет Сойузĕнчи кашни ĕççынни, вăл учăтă-и, инженер-и, рабочи-и, служăщăи-и—социалисăмла ĕç коллективĕн членĕ. Вăл капиталиссене пуйăтарма мар, социализăма тăван çĕршыва вăйлатма ĕçлет.

Пирĕн çĕршывра ĕççынниене тивĕçне хакласçĕ. Çавăнпа кашни ĕççынни куллен-кун ытларах та лайăхрах продукци парассишĕн тăрăшат.

— Епĕ хамăрăн çĕршыва, комбината йурататăп, çавăнпа ман ĕçре куллен кун ÿсĕмсем пулассĕç,—тет Сĕмĕрле комбинатĕнчи Мычикова йулташ.

Ĕççынниесем хăйсен тăван çĕршыве йуратнине стахановла йухăм çуралса ÿсрĕ. Халĕ кашни рабочи ĕмĕчĕ—стахановец пулаççи. Кашни стахановецăн ĕмĕчĕ—рекордлă ÿсĕм тăвасăсĕ. Кам пĕлмест Куçлавкка комбинатĕнчи рабочирен мăстăра çити ÿссе çитĕнĕ Цыганова йулташăн ĕçĕсем çинчен? Ăна социалисăмла ĕçлев ÿстерсе çитĕнтерчĕ, социалисăмла ĕçлев палăл çын турĕ. Цыганова йулташа Аслă Совета депутата суйлама кандидата тăратнă.

Цыганова пек хастарлă ĕçлекен рабочисем пиннерĕн путаланăçĕ. Вĕсен хисепĕ куллен-кун ÿссе çитĕнсе пырать. Вĕсен ретне социалисăмла ĕçлев прави çирĕплетсе пырать.

Сталинла Конституци Совет Сойузĕнчи кашни гражданăн çине пысăк та чыслă обязаннăçсем хурать.

„Ĕçлев ССР Сойузĕнче кашни ĕçлеме пултаракан гражданинăн обязаннăçĕ тата чыслăхĕ пулса тăрат: „кам ĕçлемест, çав симест" принципăпа" (Конституци 12 мĕш статйи).

Çирĕм пĕрремĕш çул пурăнатпăр епĕр çĕнĕ савăнăçлă çĕршывра. Кашни ĕççынни, хамăр çĕршыв пекех, ирĕкĕлехпе телейлĕхĕн пархатарлă çулĕ сывăлшĕпе сывлăт, кашни çамрăкăлăхпа çĕкленет. Епĕр ăна коммунисен партийĕ йĕртсе пынине çĕнтерсе илтĕмĕр.

ĔÇЛЕВ ПРАВИ

118 статйа. СССР Сойузăн гражданĕсен ĕçлев прави пур. Урăхла калаçман, хăйсен ĕçлемĕшĕн пысăкшăпа пахалăхне кура тӳленмен гарантиленĕ ӳç илес права пур.

Ĕçлев прави халăх хуçалăхне социалистлă организацисенче, совет обществинче производствăлăх вăйăсем пĕрмайăх ӳссе пынипе, хуçалăх кризисĕсем пулма пултарасскине тăвăрнипе тата безработицăна пĕтĕрнипе пурнăçа кĕрсе пырать.

Сталинла Конституци тивлечĕ

Канаш станцинчен 20 километрта вăрман хĕрринче Çĕнĕ Шелттем ялĕ сарăлса ларать. Шелттем çулĕ çинчен ваттисенченех сăмах йулнă: „Уйăх çути çап çутă, Шелттем çулĕ тăп такăр". Анчах та Шелттем çулĕ вăрман хуçисемпе арман хуçисемшĕн çеç тăвăр та çутă пулнă. Вĕсемшĕн йăл сывăхчăн лайăх ана пулнă. Чухăн хресченсене тăмлă ана-çăран çеç лекнĕ. Сакăн пек начар çĕр çинче тăранмалăх тырпул туса илейменнипе, хăшĕсем вăрман çулĕ тăри патне, тĕпринсем — поместнăй патне кайса пуçĕсене чикнĕ, виçпатне кайса пуçĕсене тăрăх телей çĕмĕшĕсем—хулăсем тăрăх телей шыраса çӳренĕ. Киленче ача-пăчасем сак тулли сĕрем çинче пăчăкса выçă, тумтирсĕр ларнă, трахом чирĕпе тата ытти чирсемпе асаплăнă. Картишĕнче пĕр качакаран пуçне выльăх чунĕ пулман, ана та пулăн ирĕккĕн усрама пулман, куланайшĕн мĕншĕн тыта-тыта илсе тухса кайнă. Никам та хĕрхенекен пулман чухăн сынсене. Ун çинчен 62 çулхи старик Леонтйев Кузьма çапла каласа парать:

— Ку ĕнтĕ тахçанах пулнă. Вăл çул пирĕн ĕне, лаша ӳксе вилчĕç. Çавна пула хамăр йăт çĕрĕсене куласене пăтăмăр. Хамăр пĕр тырă пĕрчисĕрех тăрса йăлтăмăр. Кĕр куннене çитсен вуласран стражник Лăзарев пар лашана кĕрлеттерсе çитрĕ те, куланай татман сынсене Митуков кулак патне пуçтартарчĕ. Нумай калаçса тăмасăрах Г. Илларионовран тытăнчĕ. Унăн укçа çукки кĕпĕсен, йăлти кустăнсем çӳрен йарса тытса, урама кăларса ывăтрĕç. Унтан мана йарса илчĕç. Мана та ăнран кайнăччен кĕнесе пĕтерчĕç. Чухăнсенчен нумайĕше стражниксем йăлтан тухса кайнăччен вăрман та ик-виç талăк тарса пурăнчĕç.

1912 çулта, Столыпин саккунĕ тăрăх, Митуковпа Гаврилов кулаксем вилнĕ сынсен çĕрĕсене списка кӳртсе, хăйсем çине илчĕç. 20—30 шар десятин тара илсе тăрачĕç. Пиншер пăтăн тырă туса илеччĕç. Кĕрпе арманĕ, çăм тапкан машинсем тытса пинĕ-пинĕне укçа пухнă весем.

Хăйсене хирĕç сăмах чĕнсен суд туса тĕрмене лартнă. Акă батрак Кириллов Филипп хăйĕн çĕрне П. Никитин кулакран кăйăла илес тесе суда жалобă парат. Суд 25 сухрăмра. Судйе хăй патне те пыртармасăр ăна, уса кăларса йарать. П. Никитин кулак-лашана малтан çитсе судйене 50 тенкĕ укçа парса ĕçе пĕтерсе лартма ĕлкĕрнĕ.

Мĕн пĕчĕкрен тăлăх ӳснĕ Н. Иванов. Вăл темиçе çул хушши çын патĕнче тарçă ĕçне туса пурăннă, анчах тăраниччен çăкăр çисе курман, ырă тумтир тăхăнса çӳреймен. Вунвуллă çула çитсен йăвăрлăха чăтаймасăр, хăйне хăй вилме хатĕрленсе вăрмана кайнă. Анчах вăрманти кайăксем ырă йăрпине вилĕмрен хăварăç.

Халăх калама çук тĕттĕм пулнă, йалта хут пĕлекен çынсем питĕ сахал пулнă. Халăхи пек куçтура çурчĕ çинчен шутламалли те пулман. „Халăх пӳрчĕ" çеç пулнă Унта чухăн хресченсене куланай тӳлеменшĕн пухса хĕненĕ, „ăс пăнă".

Сакăн пек пулнă Çĕнĕ Шелттемĕн ĕлĕкхи сăн-сăпачĕ.

1917 çулта Аслă Октябăр революцийĕ пуçланăлăха çапса салатрĕ. Йалта çĕнĕ пурнăç сӳрăлчĕ. Совет влăçĕ батраксемпе чухăнсен пурнăçне йывăма пуläшрĕ. 1929 çулта колхозлă пурнăç пуçланчĕ.

1934 çулта государствăн колхоза 302 гектар çĕр ĕмĕрлĕхе усă курма актăпах çирĕплетнĕ пачĕ. Халĕ колхозниксем государствăн панă çĕре чунтан йăратса, агротехникăй кăтартăвĕсене пурнăçласа пысрах, хăвăннăн пулман вăйăпа тырпул тусса илеççĕ. Кăçал кашни гектартан урпа 25 центнер, пăри 22,5 центнер, сĕлĕ—21 центнер, ӳраш 17,5 центнер туса илтĕмĕр. Ĕлĕк тулă пулмасăр тесе пуçĕнес акман, кăçалхи çул гектартан 18 центнер пуçтарса кĕтĕмĕр. Тырпул тухăçĕ, 1931 çулпине тивлаштарсан, 3 хут мтлăрах ӳснĕ. Колхозниксем тулăх та куçтурăлă пурнăçпа пурăнма пуçларĕç.

Алексейев Семен семйи кăçал 1200 ĕçкунĕ тунă. Вăл ĕçкунĕ тăрăх 600 пăт тырă, 72 пăт улма, пăлча-çимĕç тата 360 тенкĕ укçан илет. Илларионов Прохор 523 пăт тырă, Давыдов Мирон 430 пăт илеççĕ. Колхозра пĕччен ĕçлекенсем те 50 пăтран кайа илмеççĕ. Ку халĕ пĕр çын пуçне çавăн чухлĕ. Ĕлĕк чухăнсем семйипе те ун чухлĕ илеймен.

Сакăн пек тырпул туса илесси тăрăшмасăр пулмасть. Колхоз председателĕ Самущкин йăлтан пĕтĕм вăйне парса ĕçлет. Стахановецсем шучĕ ӳсрĕ. Иртнĕ çулта 16 стахановец пулнă, кăçал 51 стахановец. Алексейева Марийа, Павлова Наталийа, Кузьмина Йелена, Федорова Ольга, Йефимов Прокопий, Владимиров Петр стахановецсем пĕтĕм район умĕнче йăтлă сынсем пулса тачĕç. Хăйсен примерĕпе ытти колхозниксене лайăх ĕçлеме вĕрентеççĕ.

Пурнăç лайăхланса пынă çемĕн, колхозниксен куçтурăлăхĕ те хăвăртăн ӳсет. Колхоза кĕнĕ хыççăн Йерицов Демйан, Егоров Кирилл, Кириллов Филипп колхозниксем çĕнĕ те çутă пӳртсем туса лартрĕç. Вĕсем ĕлĕк пурте тарçăра, выслăнтлăн нушаланса пураннă.

— Мана ĕлĕк çын вырăнне хуман,—тет ĕлĕк 22 çул хушши тарçăра пурăннă Кириллов.—Халĕ епĕ колхозра ударник шутĕнче тăратăп. Пире çакан пек ырă та савăнăçлă пурнăçа Сталин йăлтан туса панĕ. Халĕ ăна Сталинла Конституцине çырса хунă. Мĕн пурри пĕтĕмпе пирĕн хамăрăн.

Ĕлĕкхи вахăтра ес-ерсен „Хыпар" йăтлă хаçатне виçе çын вуланнă пулсассăн, халĕ хаçат илсе вуламан пĕр хуçалăх та çук. Нумай киле чӳрече çинче чечеклĕ чаршавсем çакăнса тăраççĕ. Нумайĕшин велосипед, патефон, ҫуткупăс, гитарă, балалайкă пур. Çак çулсенче йалта 50 кил çĕвĕ машинĕ туйăнчĕç. Ĕлĕк Займуков çĕвĕçĕн çеç çĕвĕ машинĕ пулнă.

Йалта радио пур. Колхозниксен кашни каçах клуба радио итлеме пухăнаççĕ. Хăйсен килесене кӳртме тăрăшаççĕ. Нумай пулмасть йăлти çынсенчен 60 процентĕ трахомлăччĕ. Халĕ 7 процент çеç йăлнă.

Колхоз хуçалăхĕ те кунран кунах ӳссе çирĕпленсе пырать. Лаша витĕр, ферма витисем, пысăк клуб тунă. Пожар сарăйĕ çĕнĕрен тунă. Ача çуратмали çурт пур. Пур строй-касене те хăмана витсе савăрнă. 1938 çулта кĕçĕн вăтам шкул тума пĕренесем хатĕрлесе хунă. Йалта йăлпо пур. Вăл та халĕ çутă та таса магазинра суту-илӳ тăваç.

Революцийи пулнăранпа вĕренĕ çынсем нумайланчĕç, учительсем—10, ветврач—1, землемер—1, сăртту инженерĕ—1, художник—1, зоотехник—1, Хĕрлĕ çар командирĕ—1, трактористсем—8, шоферсем—3, трахработниксем—3. Бригадирсем, хăнăватворсем, йăровизаторсем чылай. Халĕ йăлти пуçламăш шкулта 100 ача, кĕçĕн вăтам шкулта 70 ача вĕренеççĕ.

Халĕ пирĕн пур права та пур. Вăл правасене Сталинла Конституцире çырса хунă. Сталинла Конституци малашнехи çĕнтерӳсен кĕрекӳ йалавĕ.

И. Радиков.

Пĕтĕм чĕререн тав тăваттăр

Епĕ, Ф. П. Нестерева, ĕнтĕ 56 çула çитрĕм. Манăн 8 ача. Пĕр ывăл Хĕрлĕ флотран тавăрăнчĕ, халĕ плановик-экономис пулса ĕçлет. Иккĕмĕш ывăл Мускавра кино-механик пулса ĕçлет тата çав вăхăтрах вĕренеç. Виççĕмĕш ывăл—техник-строител, халь ăна Хĕрлĕ çар ĕретне илчĕç,—çапла ĕнтĕ вăл хамăрăн тăван çĕршыва сыхлама кайăт. Тăваттăмĕш ывăл Максим Горький ячĕпе тăвакан шкула вĕренет. Хĕрача медрабфакран вĕренсе тухрĕ. Иккĕмĕш хĕр Мускавра институтра вĕренет, институтран вĕренсе тухассăн вăл инженер-экономист пулать. Виççĕмĕш хĕр педагогикăй училищинче вĕренет.

Пăтăа влăçĕ чухне пулăс пулсан, ачасене çакăн пек вĕрентесси çинчен епĕ шухăшлаймăн та пулăттăм. Совет влăçĕ тата Сталин йăлташ пирĕншĕн тăтăшах тăрăшнипе епĕр халĕ ачасене çакăн пек вĕрентетпĕр. Çакăншăн Сталин йăлташа, Коммунистсен партине Совет влăçне пĕтĕм чĕререн тав тăваттăр.

Епĕ хам 1936 çула çитичченпех пĕйăс та курманччĕ. 1936 çулта тата 1937 çулта Мускавра пултăм. Метро пойăсĕ çинче ларса çӳрерĕм, планетарине, зоопарка, куçтурăпа кану паркне кайса куртăм. Киносене те питĕ лайăх картинăсем курса савăнтăм.

Часах ĕнтĕ декабрĕн 12-мĕш çитет. Епĕ тата манăн 18 çул çултарнă ачасем пурте çĕршывăн чи лайăх сыпнисемшĕн сасă паратпăр. Епĕр, Шупашкарта пурăнаканнисем, Андрейева, Чкалов тата Степкий йăлташсемшĕн сасăлатпăр.

Ф. П. Нестерева.

Шупашкар хули, Чăваш урамĕ.

Сталинла Конституци—Октябрьти Социалисăмла Аслă революцин кĕрешӳвĕпе çĕнтерӳвĕн итогĕ. Конституци кунне Совет халăхĕ СССР Сойузăн Аслă Советне суйлама пĕтĕм халăха хаваласăн хатĕрленнине кĕтсе илет.

Ӳкерчĕк çинче: И. В. Сталин СССР Сойузăнчи Советсен ӳрешлăвăллă VIII-мĕш сĕсĕнче Конституци пройекчĕ çинчен доклад тăвать. (Изогиз кăларнă „И. В. Сталин" йăтăлă альбомран).

ПУЛĂШУ ИЛМЕЛИ ПРАВА

120 статйа. СССР Сойузăн гражданĕсен ватăлсан, çавăн пекех тата чирлесен ĕç ĕçлейми пулсан пурăннăшăн пулăшу илмели права пур.

Ку права—рабочисемпе служăщăчисене патшалăх шучĕпе сарлакан социаллă страховани тунипе, ĕççыннисенсе тӳлевсĕр медицинăлă пулăшу панипе, ĕççыннисене усă курмашкăн курортсем нумай панипе пурнăçа кĕрсе пырать.

ВĔРЕНӲ ПРАВИ

121 статйа. СССР Сойузăн гражданĕсен вĕренӳ прави пур.

Ку права—пуçламăш шкулсенче пурне те обязательлă йĕркепе вĕрентнипе, пур шкулсенче те, вăл шутра аслă шкулсенче те тӳлеттермесĕр вĕрентнипе, аслă шкулсенче вĕренекенсене пурне те пекех патшалăх стипендийĕсем парса тăнипе, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕрентнипе, заводсенче, совхозсенче, машинă-тракторлă станцисенче тата колхозсенче ĕçхалăхне производствăй, техникăй, агрономи ĕçне вĕрентнипе пурнăçа кĕрсе пырать.

Сталинла конституцине тав тăваççĕ

Мăн-Чураçри „Прогресс" колхозра уйăпа ĕçĕсене пĕтĕмшĕнех пĕрленĕ хыççăн кăçалхи тупăша вăлеме тытăнчĕç. Тырпул вăйлă пулнипе колхозниксен ĕçкунĕсем йăвăр тайăççĕ. Кашни ĕçкунĕ пуçне çуршар пат ытла тĕш тырă тивет.

Усов колхозник семйине 400 пăтĕш тырă илчĕ. Потапов — 400 пăт, Иванов Г. — 360 пăт таса тĕш тырă илчĕç.

Нумай тырă илекен колхозниксем тесудартăвна тырă сутса велосипедсем, çĕнĕ çĕлемеви машинă, патефон илме шутлаççĕ. Хăшпĕр колхозниксем çĕнĕ пӳрт лартма хатĕрленеççĕ.

Ĕçкунĕсем тăрăх çав тери тырă нумай илни колхозниксене хавхалантарать. Вĕсем килес çул татах та вăйлă тырпул туса илессишĕн халех кĕрешӳ пуçарма йăвăç.

Колхозниксем пуйăн та куçтурăйăл пурнăç тăвассишĕн хытă тăрăшаççĕ. Ырă пурнăç туса панăшăн Сталинла Конституцине, ăна тăвакана Сталин йăлташа чĕререн тав тăваççĕ.

П. Селивестров.
А. Васильева.

КАНĂÇ ПРАВИ

119 статйа. СССР Сойузăн гражданĕсен канăç прави пур.

Канăç прави рабочисен ĕçкунне пурнинне те пекех 7 сехет тараи чакарнипе, рабочисемпе служăщăчисене сулсеран ĕçкуçи тӳлесех отпуск парса тăнипе, ĕççыннисене усă курмашкăн санаторисем, каннăи çуртсем, клубсем нумай панипе пурнăçа кĕрсе пырать.

Пĕр çулталăк кайарах

Шăп çулталăк кайарах мана пит те пысăк телей килсе тухрĕ. СССР Сойузăн VIII-мĕш Чрезвычайлă Сйес делегачĕ, Сталинла Конституцине редакцилекен комиссин членĕ пулма тивĕçлĕ пултăм. Машшăн çав тери савăнăçлă çак кунсене епĕ ниççан та манмастăп. Халĕ те куç умĕнче пекех. Комиссин членĕсем пухăнса çитсен, Сталин йăлташ тата унăн сывăх соратникĕсем Молотов, Ждановпа Каганович, Ворошилов йăлташсем пĕр минут кайа йăлмасăр малтан кăтартса хунă вăхăтра çитрĕç. Лару 3 сехет тăсăлчĕ. Виçе сехет хушшинче Сталин йăлташ тăтăшах ура çинче тăчĕ, Конституци пройекчĕн каштни пунктăпа хăй вуласа панă, тухса калаçакансене каштнинех тимлесе тăнларĕ. Хăшпĕрисем хăй ларакан вырăнтанах калаçăн, Сталин йăлташ вĕсене трибунă çине тухса калама шăнтăр. Теприсем тата трибунă çине тухсан президиум çинеле пăхса калаçаççĕ. Сталин йăлташ ун пек чух трибунă çинче калаçакан сынна халăх çине пăхса каламатла, тесе аллине халăх çинеле кăтартать.

Трибунă çине улăхма президиум ларакан сĕтел патĕнчен иртсе каймала. Вырăн хĕсĕк, ăна Сталин йăлташ курчă те, сĕтел çинчи пур йăпаласене те урăх çĕре илсе лартса, хăйĕн çав сĕтеле айăккипех диктороса лартрĕ. Маятан илнĕ сĕтел çинчи йăпаласене вăл каллех хăй çав ĕлĕкхи вырăнах хучĕ. Телĕнетĕм, вăл пит те простой сын. Простă, ăнланмалла кăмăллăн, ăшшăн калаçат.

Комиссси ларăвĕнче Молотов йăлташ тухса калаçрĕ, вăл Конституцин уйăм ăшăтăвĕсем тăрăх ăнлантарса пачĕ. Тата Вышинскипе йăлташ та пит лайăх каласа пачĕ.

Советсен VIII-мĕш сйесĕ—ăшăхах та пĕтĕм халăх сйесĕ. Делегатсем халăх шухăшне каласа пачĕç, халăх пирĕн партине, Конституци тăвакана—Сталин йăлташа йăратнине кăтартрĕç.

Халĕ пирĕн сĕршыв Сталинла Конституци тăрăх СССР Сойузăн Аслă Советне суйлас умĕнхи тапхăрта. Декабрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн сĕршыв халăхĕ суйлав уриксем патне кайăт, вăл кун халăх пирĕн тăван сĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн, парти, халăх ĕçĕшĕн кĕрешекенсене, пирĕн çулпуçне Сталин йăлташа чĕререн парăнма сăмсене суйлат.

Шăпрес суйлав округĕнчи суйлавçăсем ман çине пысăк шанăçăк хучĕç, вĕсем мана Националăйăсен Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Мана çавăн пек пысăк шанăç панăн коммунисла партине тата унăн çулпуçĕ Сталин йăлташа шанни пулат. Епĕ партине шаннине, халăх шаннине мĕн пур вăйăа хурса ĕçленине кăтартăп.

Халăх шанăçĕнчен хаклă тĕнчере урăх нимĕн те çук.

С. К. Коротнов.

1918 çултанпа йăлсовет ĕçĕнче

Тасакова А. Й. 1918 çулта упăшкине Хĕрлĕ çара ăсатать. Хăй йăл хушшинчи хĕрӳлĕ клас кĕрешӳне хутшăнса хĕрлесем майла чĕререн ĕçлеме пуçлать. Вăл чухăнсен хушшинче çамрăк Совет влăçне пулăшасси, Хĕрлĕ çара тĕрекletесси çинчен агитацилет. Ана 1918 çулхине йăлсовет членне тата суд заседателне суйлаççĕ.

Çакăнтан цуçланса кайăт унăн советри хастарлă ĕçĕ. 1919 çулта йăна час-часах кооперацинче курма пулнă, вăл йăл-ваçăн кирлĕ товарсем илсе килес ĕçе йĕркеленĕ. Тавар лавкисенчи çитменлĕхсене палăртнă, вĕсемпе кĕрешнĕ. Хĕрарăмсенчен суйланă йăлсовет членĕ уй-хирте те час-часах пулнă, ĕçхресченесемпе калаçусем туса иртеринĕ.

— Пĕр çурпулĕк çĕр те акăнмасăр ан йăлтăр, çĕршыва тырă кирлĕ,—вичкĕн сăмахсемпе ăнлантарнă вăл ĕçхресченĕсене.

1920 çулта Тасакова йăлташ хĕрарăмсем хушшинче уйрăмăнах тăрашса ĕçлет. Халиччен кăмака умĕнчен ниçта тухман ĕçхĕрарăмĕсене пухăва илсе тухаг. Пухусенче фронтри упăшкасене пулăшасси, йăлхуçалăх ĕçĕнче пурте хутшăнса ĕçлесе çĕршыва тырă парасси, клас тăшманĕсемпе хытă кĕресси çинчен хĕрӳлĕ калаçусем пулса иртеççĕ. Хĕрарăмсем хушшинче пуçарса йăнă ĕç йăл куçтурăлăхне нумай хăпартăт. Нумайĕшĕ сывлăха медицина хушнă пек управа пуçлаççĕ, хаçат-журнал вуласа комитет çинчи йăпаласене вăл каллех хăй çав ĕлĕкхи вырăнах хучĕ. Телĕнетĕм, вăл пит те простой сын. Простă, ăнланмалла кăмăллăн, ăшшăн калаçат.

Комиссси ларăвĕнче Молотов йăлташ тухса калаçрĕ, вăл Конституцин уйăм ăшăтăвĕсем тăрăх ăнлантарса пачĕ. Тата Вышинскипе йăлташ та пит лайăх каласа пачĕ.

Советсен VIII-мĕш сйесĕ—ăшăхах та пĕтĕм халăх сйесĕ. Делегатсем халăх шухăшне каласа пачĕç, халăх пирĕн партине, Конституци тăвакана—Сталин йăлташа йăратнине кăтартрĕç.

Халĕ пирĕн сĕршыв Сталинла Конституци тăрăх СССР Сойузăн Аслă Советне суйлас умĕнхи тапхăрта. Декабрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн сĕршыв халăхĕ суйлав уриксем патне кайăт, вăл кун халăх пирĕн тăван сĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсемшĕн, парти, халăх ĕçĕшĕн кĕрешекенсене, пирĕн çулпуçне Сталин йăлташа чĕререн парăнма сăмсене суйлат.

Шăпрес суйлав округĕнчи суйлавçăсем ман çине пысăк шанăçăк хучĕç, вĕсем мана Националăйăсен Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

Мана çавăн пек пысăк шанăç панăн коммунисла партине тата унăн çулпуçĕ Сталин йăлташа шанни пулат. Епĕ партине шаннине, халăх шаннине мĕн пур вăйăа хурса ĕçленине кăтартăп.

Халăх шанăçĕнчен хаклă тĕнчере урăх нимĕн те çук.

С. К. Коротнов.

Йăпăлтăпăр

Ĕçхĕрарăмсем Асламас районĕнчи Ишлейпуç ялĕнче çĕнĕ клуб уçнă. Ăна

Вĕсен пурин те пĕр телей

Ултă сехет çитеспе Лука мучи йăлан хăйĕн карчăкне кружока кайма вăхăт çитни çинчен систерет.

— Çынсем утаççĕ ав, аťа карчăк пĕрĕн те кайа йулас мар,—тет вăл кантăкран урамала пăхса. Карчăкĕ вăл вăхăтра йăланах ĕçрен пушанса çитет. Кружока кайма хатĕрленме пуçлать.

Часах вĕсем звеньти пулăкан колхозник суртне тухса утаççĕ. Ку сурта вунă кил семьи пуçтарăнса кашни кун 2 сехет хушши суйлав саккунне тата Сталинла Конституцине вĕренеççĕ.

— Суйлав çитесси инçе йулмарĕ, анчах пирĕн вĕренмели нумай-ха,—пăмăрканнă пек сăмах хушаççĕ хăшĕсем.

— Кашни кун пурте çакнашкал лайăх пуçтарăнсан, суйлавччен нумай вĕренетпĕр,—тесе лăплантарать вĕсене агитатор пулса ĕçлекен Нĕркеçри туллимар вăтам шкул директорĕ Сурскайа йулташ.

Кружока ачăлăхĕрарăмсем те килеççĕ. Вĕсен ачисем ваљли вырăнсем сарсах хунă.

Малтан агитатор суйлав саккунĕн уйрăм статйисене вуласа, йăлантарса парать, кайран хĕрӳлĕ калаçу пуçланса кайать. Сталинла Конституци тăрăх пулса иртекен ăи демократлĕ суйлав çамрăксене те, ватăсене те питĕ хĕпĕртеттерет. Вăл Конституци пăнă ирĕклĕх тата ĕç, вĕренӳ, кану прависем кружок членĕсене хĕрсе кайса калаçма хвăхалантараççĕ. Ваттисем ĕлĕк суйлав мĕнле иртнине аса илнипе пĕрлех, патша самани вăхăтĕнчи йăвăр та хурлăхлă пурнăçĕ çинчен каласа параççĕ.

— Ĕлĕк суйлав пулсан, йе пухупа мĕнле те пулин ĕç тумала пулсан, ыйтăва ĕçлĕ татса панă,—тет Лука мучи.—Пирĕн йăлта вирĕ хупанчĕ. Пуху пулсан, унта вара ерех цив витрисемпех йăтаччĕç. Епĕр, чухăнсем, тĕнелĕ интĕмесĕр вăтанса тăрăттăмăр, мĕн тумалине кулаксем тăваттĕç.

Пĕрре пирĕн йăла налог пухма стражник килчĕ. Вăл Йăка Микули текен кулак патне чăрăнчĕ те халăх пуçтарчĕ. Хапха умне пухăнă сăмсем пĕрте кĕме хăраса тараççĕ, мĕншĕн тесен, пĕрте кĕрсенех стражник уçа сукмиссене хĕнет.

— Çапларчĕ ĕлĕк пурнăç,—тесе вăрăман сывлат Лука мучи.

Хаљ вăл Сталин йулташ туса панă телейлĕ пурнăçра пурăнать. Вĕсен çемйи кăçал колхозра ĕçлесе пин ĕçкĕмĕ тунă, кашни ĕçкуне пуçне 30 кĕрпе тĕштăрă тивет. Лука мучин ĕне пур, картшăн тулли вак йылăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк. Вăл хăй 6 çул хушши коďухра колхоз лашисене чĕререн йăратсă пăхать. Вăл пăхакан лашисем пурте самăр та çирĕп. Унăн Петĕр йăтла ывăлĕ—колхоз бригадирĕ, йăлсовет членĕ. Çапла ĕнтĕ ĕлĕк чухан пурăннă, кĕтӳ кĕтнĕ Лука мучин телейлĕ пурнăçĕ. Ахаљрен мар вăл савăнăнине: епĕ хулара пурăнатăп-и, йе йăлта-и?—тесе хăйĕнчен хăй ыйтать. Чăн та Нĕркеç йăлĕ ĕлĕкхипе тавлаштарсан тĕпренех улшăннă. Ĕлĕкхи улăм витнĕ çуртсем вырăнĕнче хаљ пысăк, сĕнĕ çуртсем сарăлса ларaççĕ. Йăлта клуб, почтă, шкулсем, кирпĕч, черепица завочĕсем пур. Иртнĕ çулла колхоз йăл хушшинче йăуха вырттакан çырмана пĕвесе пысăк пĕве турĕ.

Колхозниксем унта-кунта каймала пулсан, хăйсен автомашинĕпе çÿреçĕç, автомашинăй ваљли йăтарласа гараж тунă.

Купта Лука мучи пекех ытти колхозниксем те телейлĕ. 80 çулхи колхозник Софронов Спиридон хаљхи пурнăç çинчен çапла каласа парать:

— Епĕр ĕлĕк чухăн пурăннă, ни хăçан та хамăран тырă çиме çитмен. 1932 çулта карчăкпа колхоза кĕтĕмĕр. 1933 çулта колхозра тăрăшса ĕçлесе епĕ ударник пултăм. Хаљ манăн вăй чакрĕ, ĕçе тухмастăп. Пире ĕçе тухмасан та тырă параççĕ, вăл тырă хамăра çиме, тата тумланма тă, выљăх-чĕрлĕх усрама та çитет. Пиртен налог илмеççĕ. Карчăк çуйлав саккунне вĕренме çÿрет, кружокран килсен, мĕн вĕренни çинчен мана каласа парать. Епĕр карчăкпа иккĕн те Сталинла Конституцишĕн «савăнса» ăна туса паракан Сталин йулташа асăнса пурăнатпăр,—тет вăл.

Лука Иефстафиевпа Софронов колхозниксем пек тулли пурăнăса савăнса пурăнакан колхозниксем кашни йăлтах пумай.

Ĕлĕк темиçе тĕслĕ асап тÿснĕ ĕçхĕрарăмсем те хаљ пур йĕнĕпе те ирĕк те çителĕклĕ пурăнаççĕ Акă «Ленин çулĕ» колхоз члĕнĕ Токмакова Йекатерина ĕлĕк çынсем патĕнче ĕçлесе çÿренĕ. Унăн хăйĕн йĕркелĕ килçурчĕ пулман. Упăшки вилсен вăл 7 çулхи ывăлĕпе тăлăха йулнă та, ачине пĕрлех тĕнче тăрăх çÿреме кайнă.

Колхоза кĕрсен вăл икĕ çул хушши тăрăшса ĕçлесе çĕнĕ пÿрт лартнă, картшăн тутарнă, ĕне, ытти выљăх-чĕрлĕх туйаннă, пÿртне ралио, электричестваă кÿртнĕ. Хаљ Йекатерина ашшĕнчен 7 çулта йулнă ачине авлантарнă, вĕсем хаљ киненне иккĕшĕ те колхозра ударник шутланаççĕ.

— Мĕншĕн савăнас мар хаљ пирĕн, епĕр вĕт ĕмĕрхи нушăран туха хаљ чи телейлĕ, чи илемлĕ тулли пурăнăспа пурăнатпăр,—тет Токмакова.

Ĕçсынниссен ĕçлеме, вĕренме, канма, савăнса пурĕнма пур майсем те пур. Хаљ ĕçсынниссем пурте телейлĕ те савăнăçлă. Çакă лайăх пурăнăçа аслă Сталин йулташ туса пачĕ. Çавăнпа та пуйан та куљтурлă пурăнакан колхозниксем: Пирĕн пурин те пĕр телей—Сталинла Конституци,—теççĕ.

Ф. Çитта.

ССР Сойузĕнчи граждăнсен пĕртан правалăхĕ. Сталинла Конституци йăчĕпе „Фото художник" кăларнă фото-серирен. (Сойузфото).

Стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕ пуçланчĕ

Декабрĕн 1-мĕшĕнче совет çĕршывĕн предприйатийĕсенче стахановла рекордсен сталинла вунăкунлăхĕ калама çук пысăк сĕнĕлĕнче пуçланчĕ.

Заводсем, цехсем, сменăсем, бригадăсем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн ăмăртаççĕ.

Вунăкунлăха пуçаракансем—Мускаври Сталинский районĕнчи предприйатийсен стахановецĕсем вăл куна чапăлă çĕнтерÿсемпе палăа тунă.

Куйбышев йăчĕпе тăракан электрокомбинатри трансформатор завочĕн слесарĕ Рузин йулташ нормă тăрăх 70 ăç сехетĕ хушшинче памали продукцине 5,5 ăç сехетĕ хушшинче панă. Çав заводри стахановкаех, Блинникова йулташ нормăна 5,5 ăç сехетĕ хушшинче 214 процент тултарнă. Электрокомбинатăн лампă тăвакан заводĕнче пĕрремĕш сменă хушшинче план тăрăх 202.600 лампă туса кăлармала пулсан—205.500 лампă туса кăларнă. Ку вăл завод йулашки çулсенче пуçласа тунă рекорд пулать.

Мускаври станкостроительсем ĕçĕн чапăлă тĕслĕхĕсене кăтартнă. Станоксем тăвакан „Красный пролетарий" заводра пĕрремĕш механически цехри стахановец-долбежник Воронков йулташ сменăри нормăна 900 процент тултарнă. Сергo Орджоникидзе йăчĕпе тăракан станок заводри долбежник Иегоров йулташ нормăна 1.130 процент тултарнă.

Нижний Тагилри Куйбышев йăчĕпе тăракан металлурги заводĕнче декабрĕн 1-мĕшĕнче мартенăн пĕрремĕш кăмаки заводăн пуçламăшăнпа нихăçан пулман ĕçтунă. Задани тăрăх 95 тоннă хурăç шăрата кăлармала, çак кун 114 тоннă шăрата кăларнă. Доминă иккĕмĕш кăмакин коллективĕ планна 265 тоннă çукун шăрата кăларас вырăнне 315 тоннă шăрата кăларнă.

Листопрокат цехĕн 20 бригадинчен 13 бригади плана вăтлашшинех тултарнă.

***

Харьков облăçĕнчи Сумскири „Ленинец-ударник" йăлхуçалăх ертелĕн колхозниксем декабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа стахановла ĕçĕн çăлкуль вунăкунлăхне çуракине хатĕрленес палăлла иртерĕççĕ. Ку-колхоз кăçал гектар пуçне вăтаман 20,6 центнер тĕш тырă, 273 центнер сахăр кăшманĕ туса илнĕ. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали кун йăчĕпе колхозниксем çĕнĕ йăлхуçалăх çулне хастаррăн хатĕрленме, уй-хирсене çуртăн вăрăлхăсемпе çеç акса хăварса 1938 çулта кашни гектартан вăтам—шутпа 25 центнер тĕштырă, 300 центнер сахăр кăшманĕ туса илме обязательствă панă.

(ТАСС).

Сталински районĕнчи малта пыракан предприйатисен рекорчĕсем

Мускаври Сталински районĕнчи малта пыракан предприйатисем—стахановла рекордсен сталинла декадине пуçаракансем—социалистăмла ăмăртура малти вырăна тухассишĕн хытă кĕрешеççĕ.

Вĕсене кашни кун çĕнĕ çитĕнÿсем параť.

Прожектор заводĕнче строгальщик Кузнецов пуçне тата килте хаçат-журналсем, кĕнекесем вуласа пĕлĕве ÿстеретпĕр.

Мана ЧАССР правительстви ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн Национальăс ен Советне суйламали Сĕмĕрле округ суйлав комиссин членне çинĕлтерĕç. Çавăн пек шанăнине пурнăçласситĕн тăрашса ĕçлетĕп епĕ халĕ.

Йулашкинчен çакна калас килет: Çакăн пек телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн халăхсен суйлусне Сталин аттене пысăк спасибо.

Й. НИКИФОРОВА.

Хăман телейлĕхпе савăнатăп

Хăман 27 çулхи пурнăçра епĕ хаљхи пек савăнăçлă пурнăç курман. Хам та тĕлĕнетĕп: йепле-ха епĕ тăлăх ачаран шанчăклă, паллă çын пултăм?

1916 çулта манăн аттепе анне тĕвилсе кайрĕç. Çемйере пĕр пичче çеç тăрса йулчĕ. Вăл та 15 çулхи ача çеç пулнă, ним тума та пĕлмен. 1920 çулта пиччене Хĕрлĕ çара каланă. Киле епĕ пĕчченех йулатăп. Мана Иетĕрнери ачасен çуртне йаррăçĕ.

1933 çулта епĕ Çĕмĕрлери „Бољшевик" завода ĕçлеме кĕретĕп. Малтанхи вăхăтрах заводра епĕ уборщица пулса ĕçлетĕп. Кайăрахпа экстракт йухтаракан „Кестнер" йăтлă аппарат çине кусăрăççĕ. Ку аппаратпа епĕ кăçалхи çуллченех ĕçлетĕрем. Малтанхи вăхăтрах мана ĕçлеме йăвăр пулчĕ. Епĕ техникăна пĕлмен. Çавăнпа та ĕçукçийĕ те манăн 120—150 тенкĕрен ытла пулман. Техникăна вĕренмели кружоксене çÿресе, хамăн пĕлĕве ÿстертĕм, кестнеровшица ĕçне „отлично" туса пытăм. Нормăна та ытлашшинех тултарса ĕçлеме пуçларăм. Кун хыççăн ĕçукçийĕ те ÿсрĕ Кăçал епĕ 200-шер тенкĕ ĕçлесе илекен пултăм.

Завод директийĕ те, партком та мана ĕçре пысăк пулăшу параççĕ. Кăçал çентăбĕр уйăхĕнче тата аслăрах ĕçе—выпаркă отделенине ĕçлеме кусăрчĕç. Кунта епĕ 350 тенкĕ таран ĕçлесе илетĕп.

Пурнăç пачах урăхланса, лайăхланса пырать. Пурнăç лайăхланă май савăнса ĕçлес килет.

Епĕ хута нумайах вĕренмен, ачасен суртĕнче пурăннă чух 2 çул çурă вĕренннĕчĕ. Халĕ заводра пире вĕрентеççĕ. Епĕ тăрăшсах вĕренетĕп. Кусăр пуçне тата килте хаçат-журналсем, кĕнекесем вуласа пĕлĕве ÿстеретĕп.

Пурнăçра ырă ăмăртусем, лайăх ĕçсем çинчен ăнланатăп. Пирĕн йăлта пурĕ 22 агитатор ĕçлет. Хальхи вăхăтра округ комиссийĕнче регистрацине кандидатурăсемшĕн, вĕсен дурийĕне ĕçĕсем çинчен ăнланатăпсам параççĕ,—тет вăл.

Прени пĕтсен, сĕотри хĕрсем районри пĕтĕм хĕрсене, хĕрарăмсене суйлавçăсене чĕнсе çыру çырăç. Çырура çапла калана:

„Пирĕн округри ĕçсынниссем ССР Сойузĕн Аслă Советне депутата суйлама ССР Сойузĕн Геройне Вăлерий Павлович Чкалов, Парти Чăваш Обкомĕн секретарĕ Герасим Иванович Иванов тата Куславкă комбинатĕнчи палла работницă-стахановка Йевдокийа Петровна Цыганова йулташсене палăртрĕç. Суйлав комиссийĕнче вĕсене регистрацилерĕç.

Епĕр, Вăрмар районĕнчи хĕрачасем, суйлав кунĕ хăмăр сасăсене округри суйлав комиссийĕнче регистрацинелемелле кандидатсемшĕн—Чкалов, Иванов, Цыганова йулташсемшĕн пăхатпăр. Хăмăр районти пур суйлавçăсене те хăмăр кандидатсемшĕн хăйсен сăмăсене пама чĕнетпĕр. Кандидатсем 12-мĕшĕнче пурте пĕр кăмăллă пулса суйлав йĕшĕкĕсем патне пырса, çак шанчăклă кандидатсемшĕн сасăлар.

Сывă пултăр Ленинăн-Сталинăн мухтавлă коммунисла партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн йăуатнă çулпус Аслă Сталин!"

С. М. Кирова асăнса

Совет çĕршывĕн ĕçсынниссем аслă та сăпкă революционера Сергей Миронович Кирова фашисăмăн троцкисла бухаринла агентĕсем ирсĕрле вĕлернĕ куранна виçĕ çул тултарнине тăрăлă пухусемпе, вечĕрсемпе, митингсемпе паллă турĕç.

Мускавра Фрунзе йăчĕпе тăракан заводри парторганизацин уçă пухăвĕнче çакăн пек резолюци йышăнăнă:

„Халăх тăшманĕсем Сергей Мироновича Кирова, вăл ĕçсынни массисен телейлĕшĕн, социализăмла аслă тăван çĕршыва ÿстерес чеченлентерессишĕн, коммунисăм çĕнтерĕшĕмĕн пĕр ывăнмасăр кĕрешнĕшĕн вĕлерчĕç. Халăхăн тискер тăшманĕсен—троцкисла-бухаринла бандисен ирсĕр ушкăнне пирĕн социализăмла аслă тăван çĕршыва кайăла çăвăрма май килмерĕ, никçан та май килмĕ. Хăйĕн тăван бољшевикла партин тавра, халăхсен аслă çулпусĕ Сталин йулташ тавра таччăн пĕтĕçпе совет халăхĕ аслă та никам çĕнтерейми хăватлă. Сталинла Нарком Йежов йулташ пуçпулса тăнипе Шăлти ĕçсен Халăх Комиссариачĕн чапăлă çыннисем тăшман йăвисене çапса салатрĕç.

Ирсĕр ĕçсем тăвакансем тивĕçлипе туйанчĕç.

Киров йăтне—парти тата пĕтĕм совет халăхĕ таса чысра тытать. Киров йăчĕ—пĕтĕм ĕçсынниссене троцкисла-бухаринла шпионсене пĕр хĕрхенмесĕр аркатма, социализăмăн илханлă тăшманĕсене пурне те ним хăварамиччеех, тĕпĕ-тымарĕпех кăкаласа ывăтма чĕнет".

Ленинградра Киров йăчĕпе тăракан заводра траурлă митингра Соколовпа Красное ватă рабочăсем Кирова аса илсе сăмах тухса калаç. Вĕсем Киров йулташ питĕ пысăк пулăшу пани çинчен каласа панă. Кăçхине завод клубĕнче парти, комсомол, профсоюз тата совет активĕн траурлă ларăвĕ пулса иртнĕ. Ленинградри пионерсен дворецĕнче С. М. Кирова асăнса пулă вечĕрта вĕренекен ачасем пин ытла пулнă.

* * *

Декабрĕрĕн пĕрремĕшĕнче мĕлйушшăн ĕçсынисем радио тăрăх ревољуци çулăмлă трибунĕн Сергей Мироновичă Кировăн сасне итленĕç. „Йулашки кăларсен" редакцийĕ Ленинградран пана радиопередачана Сергей Мироновичă юлăсĕрри пилĕкĕмĕш пĕрлешÿлĕ тата Ленинград хулинчи иккĕмĕш парти конференцисенче тухса каланисене сырнă пљонкăна кĕртнĕ.

Киров йулташ Хĕрлĕ площăдре ПСК(б) Партин 17-мĕш ĕçесĕ хушшинче столицăри ĕçсынниссене саламланă чухне калана пљонкăна сине сырнă сăмахĕн татăкне Мускавăри радиопа панă.

(ТАСС).

С. М. Киров музейĕ

КИРОВ хули, 2/XII. (ТАСС). Революцин çулăмлă трибунĕ С. М. Киров пурăннă çуртра халĕ музей. С. М. Киров çамрăк ача чухнех мунчара гектограф синче революцилĕ листовкăсем пичетленĕ. Музейра çав мунчан макетне туса лартнă. Сережа Костриков çамрăк чухне пурăннă пÿлĕме вăл пурăннă чухнехи пекех туса лартнă.

Кăçал музей çĕнĕ фотографисем туйаннă. Вĕсем С. М. Кировăн пурнăçĕпе революцинĕ ĕçĕсене кăтартса параççĕ. Музей Кировăн вилнĕ хыççăн тунă скульптура маскине туйаннă.

Музейра илемлĕ картинăсем те чылай пур: „Киров Астрахăнре", „Киров Шурă тинĕс каналĕнче", „Киров ПСК(б)П XVII-мĕш сиесенче".

Облăçри революци музейĕ С. М. Киров çинчен хăвăл документсем нумай пуçтарнă: фотографисем, сăруссем, Сережа Костриковăн шкулта вĕреннĕ чухнехи ÿкерчĕкĕсенĕ. Музейăа кашни кунах экскурсисем пыраççĕ Ĕçсынниссем бољшевикăн—сталинецăн Сергей Мироновичă Кировăн çулăмлă революцилĕ ĕçĕсемпе паллашаççĕ.

Вуннăçĕ кун хушшинче 247 кубла метр

Григорий Павлович Степанин Йĕпреçри „Кооплесаром" власталăх ертелĕнче 1933 çултанпа ĕçлет. Вăл халĕ вăрман касса хатĕрленĕ, йăвăçсем купаланă, вагонсем тиенĕ çĕрте ĕçлет.

Степанин иртнĕ вăхăтсенче пур ĕçре те тăрăшса ĕçленĕ, нормăна йăланах иртерĕçе тултарнă. Анчах унăн пултарулăхне, мăтăрлăхне никам та шута илмен. Ертел правленийĕ унăн ĕçĕпе интереслемен.

Ертелĕн 12 лучковăй пăчкă пулнă. Вăл пăчкăсем çулталăк хушши завхоз аллинче, складра усăсăр выртнă. Степанин кăçал çав пăчкăсемпе ĕçлеме шут тытать.

— Епĕ лучковăй пăчкăпа ĕçлеме шутлатăп,—тенĕ Степанин хăйĕн йулташĕсене.

— Ĕçлесе пăх та, темĕн, ĕç калаларăр-ши?—тенĕ ăна йулташĕсем.

Степанин йулташĕсене итлемесĕр ертел правленине кайса хăйне валли пĕр лучковăй пăчкă çыртарса илет. Пăчкăна вăрманпромхозри мастера йусаттарать. Çакăн хыççăн Степанин нойабрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăрмана ĕçлеме тухать. 13 кун çине тăрса ĕçленĕ хыççăн мĕн чухлĕ ĕçленине хисеплеме илет. Степанин 247 кубла метр йăвăç хатĕрленĕ палăрчĕ. Çапла Степанин 13 кунхи плана 317 процент тултарса 494 тенкĕ ĕçлесе илет.

Кун çинчен правленине пĕлтерсен, унта ĕçлекенсем ĕненмесĕр тăнă. Анчах ĕç куç умĕнче.

— Пирвай манран кулатăçĕç. Лучковăй пăчкăпа ĕç тухмаст тет-чĕç,—каласа парат Степанин,—халĕ, лучковăй пăчкăпа пысăк тухăçлăха ĕçлеме май пуррине курсан, ман çумма ытти рабочисем те хутшăнма пуçларĕç. Халĕ епĕр иккĕн ĕçлетпĕр. Çитес куне лучковăй пăчкăпа ĕçлекенсен бригадине организацилеме шутлатăп. Анчах мана кирлĕ пулăшусем памаççĕ. Епĕ пăчкă хăйраса тăракан сыр пулсан, кунне 8 сехет ĕçлесе 25—30 кубла метр тума пултаратăп.

Ертел правлени стахановецсем çине кирлĕ пек çăвăрăнса пăхмасăт-ха. Вĕсене ваљли тухăçлă ĕçлеме, лайăх условисем туса парассишĕн тăрăшмасăр. Ĕçукçи те вăхăтра парса тамăç. Степанин икĕ уйăх хушши ĕнтĕ ĕçукçи илмен.

Рабочисем хушшинче Сталинла Конституцине, суйлав Положенине вĕренессине те тивĕçлине организацилемен. Рабочисенчен нумайăшĕсем суйлав Положенине начар пĕлеççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем патĕнче хаçат-журналсем те, кĕнекесем те çук.

Д. Михайлов.

Колхозниксен килĕсенче электричествăпа радио пур

КУКЕÇ. Питукассинчи „Память Ленина" колхоз çулленех пуйăнланса, куљтурланса пырать. Йалта халĕ электростанци лартнă. Кашни киштех электричествă çутатать, 15 колхозник килне радио памăр.

И. Лаврентйев.

Йĕлĕк районĕнчи Аслă Шăхаљ суйлав участкинче массăлă агитацилĕ ĕçе лайăх организацилеме. Кунти суйлă-в участкинче „Бољшевик" йăтлă стена хаçатĕ тухса тăрать. Стена хаçатне кăларас ĕçне парти членĕ Красильников Петр тăрăшса ĕçлет. Хаçатра Сталинла Конституцине суйлав саккунĕ çинчен йăлантарса параççĕ. Хаçат çинĕк кунта пĕрре тухать, кашни №-не виçшер экземплăр кăлараççĕ.

Ещĕ лайăх организацилеме

Н. В.

Агитаторсен семинарĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри суйлав участкисенче ĕлекей агитаторсен пĕркунлăх семинарĕ пулса иртрĕ. Пĕтĕмпе 66 агитатор пухăнчĕç. Семинарта В. М. Молотов йулташ 1937 çулхи нойабрĕн 6-мĕшĕнче Пысăк театрта чăпăл авселанине тунă докладпа тата К. Е. Ворошилов й. нойабрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площăдра тухса каланине вĕренчĕç. Агитаторсем хăйсен ĕçесенчи опычĕсем çинчен каларĕç.

Парти райкомĕ йышăннă тăрăх агитаторсен семинарĕ кашни пилĕкхунăйăра пĕр хут пулса иртмелле.

В. Захаров,
Й. Сигайев.

Ответлă редактăр-заместительĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкарти суйлав комиссийĕсене

савнашкалах Шупашкар, Улатăр, Йĕтĕрне, Çĕмĕрле, Канаш, Çĕрӳ, Сĕнтĕрвăрри тата Куславкка районĕсенчи суйлав комиссийĕсене пĕлесе тăма

КОГИЗ-ăн Шупашкарти, Улатăрти, Канашри, Çĕмĕрлери, Йĕтĕрнери, Çĕрӳри, Сĕнтĕрвăрринри тата Куславкинри МАГАЗИНĔСЕНЕ хулăсенчи тата йăлсенчи

СУЙЛАВ УЧАСТКИСЕН ÇУРЧĔСЕНЕ, ПУЛĔМĔСЕНЕ ИЛЕМЛЕТМЕ

çĕнĕ портретсем илинĕ:

ПОЛИТБЮРО	хакĕ 1 тенкĕ
СТАЛИН (сăрăпа туна)	„ 2 „
СТАЛИН	„ 50 пус
СТАЛИН и ВОРОШИЛОВ (сăрăпа туна)	„ 2 тенкĕ
ЛЕНИН на ТРИБУНЕ (сăрăпа туна)	„ 2 „
МОЛОТОВ	„ 50 пус
КАЛИНИН	„ 50 „

Участкăсенчи тата районсенчи суйлав комиссийĕсен асăннă портретсене туйанса хăйсен суйлав çурчĕсене, пулĕмĕсене капăрлатмала.

КОГИЗ-ăн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелĕ хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăйĕсене майлă пиншĕç.

Уполномоченный Чувашглавлита № 926. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 2601. Тираж 13964. 5[illegible]—32 стр. Т-[illegible]. Гл. №